ÇЁНЕ ÇУЛ ТАТ, ЯЧЁПЕ САЛАМ

Йёпреç районён хаçачё

ÇЁНТЕРЎШЁН

Шăматкун
2007 ç., раштав, 29

107
/9024/№

Хаçат 1932 çултанпа тухса тăрать

Хакё ирёклё

электронлă адрес:
ibresi@press.cap.ru

ХАКЛĂ ЙĂХТАШĂМĂРСЕМ!

Сире çывхаракан чи çутă уявсемпе – Çёнё çулпа тата Раштав кунёпе чёререн саламлатăп.

Эпир сирёнпе пёрле Чăваш Ен историйён тата тепёр страницине çыртăмăр. Пурнăç тата та лайăхрах, хăтлăрах пултăр тесе, республика чăннипех тёллевлён тăрăшрё. Çынсем хăйсен семйисем тивлетлё пулччăр, хăйсен предприятийёсем, тăван Чăваш Ен, çёршыв аталанччăр тесе вăй хучёç. Иртсе каякан çул тăван республика летописёнче шанчăклă вырăн йышăнма тивёçлё чылай пулăмпа паллă пулса юлчё.

Раççей историйёнче халиччен пулман хăвăртлăхпа çул-йёр тăватпăр, çитес çулта вара Чăваш Ен япăх çулйёрсене пётермелли историллё задачăна татса панă пёрремёш регион пулё. Халăх пурăнакан пур вырăнсене те хытарнă автомобиль çулёсемпе çыхăнтармалли программăна пурнăçа кёртни катари ялсене тата экономикăна паянхи пурнăç варкăшне илсе çитерет.

Ас-хакăллăхпа вёрентёвён центрсем пулса тăнă 500 тёслёх библиотекăн сетьне тăвасси вёçленчё. Раççейре сайра тёл пулакан проекта ёçе кёртнине пула кёнекепе интересленесси ўсрё. Чăваш Енри библиотекăсене çўрекенсен йышё 40 процент ытлараха çитрё. Пирён культура тытăмёнче чăннипех улшăнусем пулса иртеççё, ăнсăртран мар ёнтё кёçех Шупашкарта В. В. Путин Чăваш Енре ёçлё çулçўревре пулнин пётёмлетёвёсем тăрăх Борис Николаевич Ельцин ячёллё Президент библиотекин Атăлçи центрё уçалё.

Халăхра: «Сывлăх – пурлăх», – теççё. Сывă нацин кăна шанчăклă пуласлăх пур. Республикăра пур çёрте те пурнăçра спорт мелёсене çирёплетмелли тёллевлё ёç туса ирттереççё – хальхи йышши спорт инфратытăмё вăйлăн çёклене. Район центрёсенчен нумайăшёнче бассейнсемлё Спорт керменёсем ёçе кёчёç, кёçех вёсем республикăри кашни районпа хулара, халăх йышлă пурăнакан вырăнсенче пулёç.

Республикăра приоритетлă наци проекчёсем ăнăçлă аталанаççё, вёсем Чăваш Ене социаллă пурнăçёпе экономикин аталанăвне хушма вăй параççё. Эпир ку тёлёшпе пухнă опытпа ытти регионсенче тата федераци шайёнче те интересленеççё. Кăçалхи авăн уйăхёнче Раççей Президенчё Владимир Путин республикăра пулнă хыççăн Чăваш Ен нацпроектсене пурнăçа кёртес ёçре малта пынине палăртрё. Пирён спортсменсем каланă пек, çёнтерўçён майкине упрамаллах.

Пире социаллă ыйтусемпе экономика ыйтăвёсен пысăк спектрне ăнăçлăн пурнăçа кёртме республикăн экономика вăй-хăвачё хăвăрт ўссе пыни нумай пулăшать, çавна пула кăçал республика бюджетне пысăклатас тёллевпе ăна виçё хутчен пăхса тухма тиврё. Хушма тупăшсене социаллă задачăсене пурнăçлама, обществăлла инфратытăма малалла аталантарма, ёç укçине ўстерме янă. Çынсенче ыранхи куна шанаслăх çирёпленет. Çавнах кăçал ачасем çураласси çирёппён ўсни те кăтартуллăн ёнентерет – Ачасен çулталăкёнче вăл 11 процент таран ўсрё.

Хисеплё йăхташăмăрсем! Çывхаракан 2008 çул тата та интереслёрех, тата туллирех пуласса шантарать. Пире хăвăрт утассипе тёнче кубокён ăмăртăвёсене ирттерме шанчёç, тёнчери спорт форумне 70 ытла çёршывран хутшăнакан çынсен асёнче Чăваш Ен мёнлерех юласси пирёнтен кашниченех питё нумай килет. Пирён тăван республикăна аталану, чечеклену тата ăс-хакăл çутлăхён çулёпе шанчăклăн кайса пыма пёрлехи вăйпа пулăшмалла.

Çитес çула республикăра Ырă ёçсен çулталăкё тесе палăртнă. Халăхра çапла калаççё: «Ырă ят ылтăнран çутă». Пирён тăван çёрёмёр ырă ёçсемпе чапланса пытăр. Сире ăнăçлă та тухăçлă ёçлеме телей, тивлет, юрату, чи çутă ёмётсене пурнăçа кёртме ăнăçу сунатăп.

Н. ФЕДОРОВ,
Чăваш Республикин Президенчё.

ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ!

Çёнё çул саламне йышăнсамăрччё. Ку уяв – çулталăкри чи савăнăçлă та асамлă уяв. Çак кун эпир хамăрăн тăвансемпе çывăх çынсене сывлăхпа телей сунатпăр. Иртсе каякан çулăн пётёмлетёвёсене тăватпăр тата пуласлăх тёллевёсене палăртатпăр. Иртнё çулта мён лайăххи пулни хушăнсах пытăр, малта пире çёнё çёнтерўсем кётеççё. Сирён чи çывăх ёмётёрсем пурнăçа кёччёр, республикăра пурăнакан кашни çын килне телей кётёр. Чăваш Ен Президенчё Николай Федоров ырă ёçсен çулталăкё тесе палăртнă 2008 çулта пирёнтен кашниех пурнăçа тата савăкрах тăвассишён тăрăштăр.

Сире хăвăрăн вăй-халăра ёненсе тăма шанăç, çирёп сывлăх, çемьере тивлет, Çёнё çулта кашниех телей, тăван республикăна вара чечеклену сунатăп.

Павел СЕМЕНОВ,
Раççей Федерацийён Патшалăх Думин депутатё, «Единая Россия» фракци членё.

Дорогие соотечественники!

Примите сердечные поздравления с наступающими Новым годом и праздником Рождества Христова!

Пусть 2008 год станет годом исполнения надежд, реализации самых смелых планов и начинаний, ознаменуется добрыми делами. Счастья вам, здоровья, благополучия и любви в Новом году!

Надеемся, что мы вместе приложим все силы для дальнейшего развития страны и родной республики, повышения качества и уровня жизни ее жителей.

Чувашское региональное отделение Всероссийской политической партии «Единая Россия».

Примите наши самые теплые и сердечные поздравления с наступающим Новым 2008 годом! Надеемся, что уходящий год порадовал Вас интересными встречами, профессиональными успехами и приятными моментами. Искренне желаем Вам в новом году не останавливаться на достигнутом и смелее претворять в жизнь свои творческие планы.

Здоровья Вам, благополучия, счастья, удачи и позитивного настроя.

Коллектив ОАО Страховой Компании «Чувашия-Поддержка».

ХИСЕП ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАНĂ

Халăх сывлăхне сыхлас ёçре чылай çул тăрăшса ёçленёшён «Йёпреç районёнчи тёп больница» сывлăх сыхлавён муниципалитет учрежденийён васкавлă медицина пулăшăвён уйрăмён водительне **Василий Петрович ЕРЕМЕЕВА** тата **Людмила Геннадьевна НИКОЛАЕВА** фельдшера Йёпреç районён Хисеп грамотипе наградăланă.

x x x

Халăха электроэнергипе тивёçтерсе тăрас ёçре чылай çул тўрё кăмăлпа тăрăшса ёçленёшён тата «Чăвашэнерго» уçă акционерлă обществăна туса хунăранпа 50 çул çитнё май «Чăвашэнерго» уçă акционерлă обществăн кăнтăр электросечён Йёпреçри ёçченёсене Йёпреç районён Хисеп грамотипе наградăланă:

Николай Тихонович КОРНИЛОВА – тёп инженера;

Евгений Викторович СКОРОМНОВА – çёр пăралакан машина машинистне, энергомонтера.

Хаклă ентешёмёрсем!

Сире чылайранпа кётнё чаплă уявсемпе – Çёнё çулпа тата Раштав кунёпе чун-чёререн саламлатăп. Çак асамлă кунсенче пирёнтен кашниех иртсе каякан çул пётёмлетёвёсене тăвать тата малашлăх тёллевёсене палăртать.

Хыçа юлакан 2007 çул Йёпреç районён историйёнче паллă йёр хăварчё. Эпир район 80 çул тултарнине уявласа ирттертёмёр. Çак çул çёнё çитёнўсен тата ырă пуçарусен çулё пулчё. Пётём район строительство лапамне аса илтерет тейён. Чăваш Тимеш ялёнче çёнё шкул çурчё ёçе кёчё. Çёнё çул умён вара Йёпреç поселокёнче физкультурăпа сывлăх çирёплетёвён комплексё хăйён алăкёсене уçса ячё. Шанчăклă çулсем тăршшё те çултан çулах вăрăмланса пырать. Акă 2007 çулта çул-йёр ăстисем 19 çухрăм ытла хытарнă çул ёçе кёртрёç. Кунпа пёрлех районти халăха ёçмелли паха шывпа тивёçтермелли тёллевлё программа та ăнăçлăн пурнăçланать.

Çёнё, Ырă ёçсен çулталăкёнче пире пысăк та яваплă задача кётсе тăрать. Районти ёççыннисем ăна чыслăн пурнăçа кёртессе шанас килет. Çёнё çул халăх хуçалăхён пур отраслёсенче те çёнё ўсёмсем тунипе палăрса юлё. Çакна палăртма уйрăмах кăмăллă: 2008 çул пирёншён уйрăмах асра юлмалли çул: эпир Республика кунне уявлама килекен хаклă хăнасене хамăр патăрта кётсе илёпёр. Çакă вара пирён çине уйрăмах пысăк яваплăх тиет. Халăх пурăнакан вырăнсене тирпей-илем кўресси чи малти вырăна тухса тăрать, çавна май ку енёпе калама çук нумай тимлемелле пулать. Район центрё тата та хитререх, тасарах, илёртўллёрех пуласса эпё шанатăп.

Районти ёç çыннисем хăйсен кулленхи хастар ёçёпе тăван республикăн, çёршывăн социаллă пурнăçёпе экономикин аталанăвне тивёçлё тўпе хывасса шанса тăратăп.

Хаклă ентешсем, сире пурсăра та çёнё ўсёмсемпе çитёнўсем тума сывлăх, ырлăх-тивлет, юрату сунатăп. Çёнё çул каçёнче ăша иленнё ёмётёрсем пурнăçа кёрсе пыччăр.

Çёнё çул ячёпе, çёнё телейпе!

А. ПЕТРОВ,
Йёпреç районён пуçлăхё.

Раççей Президенчё Владимир ПУТИН:

«Чăваш Енре ялти шкулсенчен вёренсе тухнă ачасем çёршывăн сумлă вузёсене вёренме кёрекенсен шучё вунă хут мар, çёр хутчен ўснё! Туятăр-и? Çак кăтарту пёрлёхлё патшалăх экзаменёпе те, çав вёрентў центрёсем пуррипе те çыхăннă».

Эпир – Президент гранчён телейлё хуçисем

ЎКЕРЧЁКРЕ: *информатика учителё Н. Григорьев 10 «м» класпа компьютер кабинетёнче.*

Д. ДИМИТРИЕВĂН сăнўкерчёкё.

«Вёрентў» наци проектёнче чи кирли вăл — вёренекенсене паха пёлў парасси, урăхла каласан, ачана хăйён пурнăç çулне хăй тёллён тёрёс суйласа илме воспитани парасси.

Çак чи пёлтерёшлё задача пирён районти учительсене чи малтан педагогика ёçё-хёлёнче сисёмлё улшăнусем тума хистет. Çакна пурнăçа кёртмешкён района çичё йёркеллё база шкулё туса хунă. Çав шкулсенче финанс тата пурлăхпа техника ресурсёсене пухса чăмăртанă анчах мар, чи пёлтерёшлё ыйтăва – пысăк квалификациллё кадрсем хатёрлессине татса панă. Йёпреçри пётёмёшле пёлў паракан 1-мёш вăтам шкул çумёнчи ресурс центрён никёсё çинче, акă, шкулсем хушшинчи методика центрё ёçлет, унта учительсем компьютер вăрттăнлăхёсене алла илеççё, квалификацие ўстермелли курсра пёлў пухаççё. Иртнё вёренў çулёнче асăннă центрта учительсен икё ушкăнне вёрентнё. Хальхи вăхăтра кăçалхи планпа килёшўллён вёрентў ёçёнче компьютерпа усă курма хăнăхас тата ку енёпе

/Вёçё 5-мёш стр./.

Уважаемые работники образования и ветераны педагогического труда!

Примите самые искренние и сердечные поздравления с наступающими праздниками - Новым годом и Рождеством Христовым!

Пусть 2008 год будет светлым и радостным. Пусть он станет для вас годом счастливых свершений, добрых дел, принесет радость, творческих удач, открытий и истинного вдохновения, будет наполнен добротой и любовью. Возьмите с собой в Новый год все самое лучшее: верных друзей, тепло родных и близких, добрые мысли и веру в успех.

Крепкого вам здоровья, счастья, мира и благополучия.

А. НИКОЛАЕВ,
начальник отдела образования администрации района.

Районти агропромышленность тытăмне кĕрекен предприятисен ертӳçисене, хăйсен тĕллевĕсене пурнăçа кĕртессишĕн хастарлăх кăтартса тăрăшакан тата хамăрăн коллектив чыс-сумне ӳстерессишĕн вăй хуракан мĕнпур ĕçченсене Çĕнĕ 2008 çул ячĕпе чун-чĕререн хĕрӳллĕн саламланă май, çирĕп сывлăхлă пулма, ĕмĕтсене чăн тума, çемьесенчи тивлетлĕхпе тăнăçлăха упрама, пĕр-пĕринпе тытакан çыхăнусене çирĕплетсе пыма ырлăх-ăнăçу, çутă телейпе таса ăраскал сунатпăр.

Сысна ĕрчетекен «Рассвет» предприяти дирекцийĕпе профсоюзăн вырăнти комитечĕ.

Дорогие работники и ветераны потребкооперации, уполномоченные, пайщики!

Примите самые теплые слова поздравления с Новым 2008 годом и светлым праздником Рождества Христова!

Пусть открывает Новый год
Дверь в мир добра и красоты,
Пусть ваша жизнь вперед идет
И все сбываются мечты!

Председатель совета Ибресинского райпо В. ПАХОМОВА.

ЫРĂ ĔÇСЕН

ХРОНИКИ

Галина аппа кăмăлтан кӳнĕ парне

Пулаççĕ вĕт-ха чăннипех те ылтăн алăллă çынсем! Вĕсенчен пĕри – Анатри Кĕлешкассинче пурăнакан Галина Федотовна Николаева тухъя ăсти. Камран, ăçтан вĕреннĕ-ши вăл чăваш хĕрарăмĕн çипуçне капăрлатакан илемлĕ япаласене тума? Ăçтан кăна тупса çитерет-ши пусми-таварне, шăрçи-тенкине! Унăн алли витĕр ăсталанса тухнă тухъя, масмак, тевет, шӳлкеме – чăн-чăн шедевр.

Хитре япаласем тума пĕлекенĕн чун-чĕри те хитре. Галина аппа – парне туса пама юратакан уçă кăмăллă хĕрарăм, хăй ăсталанă япалисемпе çывăх çыннисене, тăванĕсене, мăнукĕсене савăнтарсах тăрать. Акă Çĕнĕ çул уявĕ умĕн Галина Федотовна Йĕпреçри ачасен искусство шкулĕн воспитанникĕсене те парне кӳчĕ – чăваш тумĕн 4 комплектне илсе килсе пачĕ. «Ташласа савăнччăр хĕр пĕрчисем манăн тухъясене тăхăнса, чăваш ташшин илемне татах та ӳстерччĕр», – тет хăй юратса тăвакан ал ĕçĕ ыттисене савăнăç кӳнишĕн чунтанах хĕпĕртесе Галина Федотовна.

Эпир ачасемпе пĕрле чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе çак хаклă парнесемшĕн тав тăватпăр ăна.

С. РОМАНОВА,
Йĕпреçри искусство шкулĕн преподавателĕ.

Ачасен концерчĕ ашшĕ-амăшне килĕшрĕ

Кĕлĕмкассинчи культура çурчĕ çумĕнче Йĕпреçри искусствăсен шкулĕн театр уйрăмĕ пĕр çулталăк каялла кăна ĕçлеме тытăннă-ха. Ана çак ялта çуралса ӳснĕ, Шупашкарти Ф. П. Павлов ячĕллĕ музыка училищинчен вĕренсе тухнă Александра Максютова ертсе пырать. Пултаруллă хĕр çак тапхăрта хăйĕн пĕлĕвне малалла ӳстерме кăмăл турĕ, ĕçленĕ хушăрах Пермь хулинчи культурăпа искусство институтне вĕренме кĕчĕ. Ăста специалист ачасене чăваш халăхĕн фольклорĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнакан юрăкĕвĕсене, аваллăхран упранса юлнă ача-пăча вăйăсене тепĕр хут «чĕрĕлме» пулăшать. Ку уйрăма çӳрекенсем сцена çинче те хăйсене артистсем пекех тытаççĕ. Час-часах куракансене концертпа савăнтараççĕ, республикăра иртекен тĕрлĕ мероприятие те пуçаруллăн хутшăнаççĕ вĕсем.

Акă нумаях пулмасть ялти культура çуртĕнче театр уйрăмне çӳрекенсен пултарулăх каçне йĕркелерĕç. Куракансен хушшинче çамрăк талантсен ашшĕ-амăшĕсем те пулчĕç. Ачасем хăйсен ăсталăхне туллин уçса пачĕç. Залра ларакансем вĕсен кашни номернех кăмăлласа йышăнчĕç.

Евгений СТЕПАНОВ,
ЧПУ студенчĕ.



2007 çул вĕçленчĕ. Çĕнĕ çулăн пĕрремĕш кунĕнче эпĕ каллех Чăваш Республикин Президенчĕ Н. В. Федоров республикăри Патшалăх Канашне пĕлтĕр янă Уçă çырăвĕн малтанхи йĕркисене аса илтĕм. Вĕсенче Николай Васильевич çĕнĕ çула пырса кĕнĕ вăхăта черетлĕ çуралнă кунпа танлаштарнă май, пурне те çулталăка пысăк шанчăкпа пуçлама, хыçа юлнă çулта тунă ĕçхĕле тивĕçлипе хак парса пĕтĕмлетме кирли çинчен ас тутарать.

Пирĕн ĕçченсен шанчăклă утăмĕ

Пирĕн ял хуçалăх предприятийĕн ĕçченĕсем 2007 çулта хăш-пĕр çитĕнӳсем турĕç. Выльăх-чĕрлĕх ферминче ĕçлекенсем вара çулталăк тăршшĕпех районта ăмăртура малта пычĕç. Сĕт туса илессипе эпир чылайранпа ĕнтĕ пĕрремĕш вырăнта, çавăншăн районтан паракан куçса çӳрекен ялава тытса тăратпăр алăра. Çулталăк пуçланнăранпа пĕтĕмпе 332,4 тонна, усă куракан кашни 100 гектар çĕр пуçне 382,9 центнер продукци туса илтĕмĕр. Кашни ĕнерен илнĕ вăтам сăвăм пĕлтĕрхи чӳк уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлнех 3911 килогрампа танлашрĕ. 2006 çулхи кăтартуран чылай лайăхрах. Ене сăвакансен тăрăшулăхĕ, вĕсен ăнланнуллă та килĕшӳллĕ ĕçĕ çак ӳсĕме тума пулăшрĕ коллектива.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарасси те йĕркеллĕ пулса пырать. Çак кунсенче пирĕн ĕне сăвакансем куллен çур пăтран кая мар сĕт сăваççĕ. Ку енĕпе те эпир районта малтисем.

Кашни ирех фермăран пуçлатăп ĕç кунне. Кунта мĕнлерех лару-тăру тăнине хам куçпа лайăх курса тăратăп. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансем Çĕнĕ çулта тата та тăрăшарах ĕçлес тĕллевлĕ. Сăмаха ĕçпе çирĕплетме мĕнпур майсем çитеççĕ вĕсен, рациона тутлăхлă апатсем зоотехника виçипе пăхнă чухлех кĕртнĕ. Витесене хĕл кунĕсенчех яваплă тапхăра лайăх хатĕрлесе çитернĕ.

Анчах та, пĕтĕмĕшле илсен, чылай хуçалăхра выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕç çултан çул тăкаклă, вăл рынок экономики хуçаланнă тапхăрта лайăх еннелле улшăнасси иккĕленӳллĕ. Ку отрасль ял хуçалăхĕн чи кая юлнă отраслĕ тесен те йăнăш пулмĕ. Малалла кайма чăрмантаракан сăлтавсем йышлă: ĕç условийĕсем начар пулни, выльăхсен тухăçлăхĕ пĕчĕкки, апат кирлĕ чухлĕ пулманни, вăл япăххи, механизаци «уксахлани», ферма ĕçченĕсене кирлĕ пек хавлантарманни т. ыт. те – ӳсĕм тума «пӳлсе» тăракан «каскасем». Ял хуçалăх предприятийĕсене хальлĕхе килти хушма хуçалăхсем вирлĕн пулăшса пыраççĕ. «АПК аталанăвĕ» приоритетлă наци проекчĕ хушма хуçалăх тытакансене çăмăллăхлă кредитсем илмешкĕн май туса пачĕ. Вĕсем кил-хуçалăхри продуктсене сутма хастарлăрах хутшăнма тытăнчĕç. Акă, эпир иртнĕ çулхи 11 уйăхрах халăхран 480 тонна сĕт пуçтартăмăр. Ку ĕç малалла пырать. Сĕт сутакансене укçа вăхăтра тӳлетпĕр.

Иртсе кайнă çулталăкра сахал мар тунă. Эпир мĕн тунипе çырлахса лармăпăр. Малта çĕнĕ чикĕсем кĕтсе тăраççĕ. Ял хуçалăх кооперативĕн членĕсем вĕсене пурнăçа кĕртесси пирки иккĕленместĕп эпĕ.

Юлашкинчен эпĕ районта пурăнакан мĕнпур çынна Çĕнĕ çул ячĕпе саламласа, пуласлăхра нихăçанхинчен пысăкрах çитĕнӳсем тума ырлăх-сывлăх, ăнăçу сунатăп.

В. НИКИФОРОВ,
«Патман» ЯХПК ертӳçи.

Хаçатăн воспитани парас ĕçри пĕлтерĕшĕ

Йĕпреçри шкул-интернатăн 6-мĕш ушкăнĕнче районти «Çĕнтерӳшĕн» хаçатăн кашни номернех йĕркеллĕн çĕлесе пыраççĕ. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ çапла тăваççĕ. Ку ушкăнпа ĕçлекен Л. В. Селиванова, Т. Н. Королева, Е. Ю. Брусянина педагогсем палăртнă тăрăх, ачасен районта, ытти çĕрте мĕн пулса иртнине пĕлсе тăнин пĕлтерĕшĕ пысăк. Ара, райхаçат хамăр тăрăхри хыпарсене кăна мар, республикăри ĕç-хĕле те çутатса тăрать-çке.

Ку ушкăнра пирĕн районти ялсенчен – Чăваш Тимешрен, Эйпеçрен, Хыркассипе Шăрттантан, Ленинкассинчен килнĕ ачасем воспитани илеççĕ. Хаçатра хăйсен ялĕсенчи çынсен сăн ӳкерчĕкĕсене е вĕсем çинчен çырнă статьясене курсан, еплерех çуталса каяççĕ ачасен сăн-пичĕсем. Вĕсем тӳрех воспитатель патне чупса пыраççĕ те, мĕн çырнине пĕрле ларса вулама ыйтаççĕ. Лешсем вара вĕсен сĕнĕвĕсене пурнăçа кĕртме тăрăшаççĕ, çав самант педагогсемшĕн воспитани ĕçĕн витĕмлĕ палăрăмĕ пулса тăрать. Ара, пирĕн педагогсен, çĕршывăн пулас гражданĕсене ырă пулăмсем çинче никĕсленнĕ тĕслĕхсене тĕпе хурса воспитани памалла-çке.

Пирĕн ачасем кашни юнкунпа шăматкун тухакан район хаçачĕн çĕнĕ номерне тӳсĕмсĕррĕн кĕтеççĕ. Хĕрачасене районти шкулсенчи ачасен пурнăçĕпе паллаштаракан «Шкул пурнăçĕ» ярăм килĕшет. Арçын ачасем спорт хыпарĕсемпе интересленеççĕ, лирикăллă ӳкерчĕксене, сăмахкаçмăшсене кăмăллакансем те пур. Хаçатăн кашни номерĕ интереслĕ те тулли содержаниллĕ. Эпир, педагогсем, районти шкулсенчи ытти ĕçтешсене те хăйсен класĕсенче вуламашкăн район хаçатне çырăнса илме сĕнетпĕр.

Редакцие вара çĕнĕ шыравсене тухма сунатпăр. Çĕнĕ çулта унăн çывăх тусĕсем ытларах пуласса шанатпăр.

Е. БРУСЯНИНА,
шкул-интернат воспитательници.

ӲКЕРЧĔКРЕ: çамрăк вулавçăсем райхаçатăн кашни номерне чăтăмсăрăн кĕтеççĕ.

Д. ДИМИТРИЕВ сăнӳкерчĕкĕсем.

СВЕДЕНИЯ

о размере оплаты и предоставляемой печатной площади, которую редакция Ибресинской районной газеты «За победу» резервирует для проведения предвыборной агитации в период избирательной кампании по выборам Президента Российской Федерации

В соответствии с Федеральным законом «О выборах Президента Российской Федерации» РГУ «Редакция Ибресинской районной газеты «За победу» сообщает об общем объеме печатной площади, которую редакция райгазеты «За победу» предоставляет зарегистрированным кандидатам на должность Президента Российской Федерации для проведения предвыборной агитации, – 5 процентов площади издания в период со 2 по 29 февраля 2008 года.

Стоимость печатной площади для проведения предвыборной агитации составляет 18 руб. за кв. см (НДС нет).

Справки по телефонам: 2-11-92, 2-11-97.

УВАЖАЕМЫЕ РЕКЛАМОДАТЕЛИ!

Делайте бизнес с нами. Реальный тираж, реальная реклама.

Телефоны: 2-11-92, 2-11-97.

Çĕнĕ Программа хыçĕнче мĕн?..

Çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕнче хам юратакан райхаçатра шухăш-кăмăлăма уçса парас тетĕп. Уçăмлăнах çакна палăртасшăн, хыçа юлнă ял хуçалăх çулĕ ытла та кăткăс пулчĕ. Çуркунне малтанах ăшă пулни, кайран сивĕ çумăрсем тăтăшах тăни ӳсен-тăрансене ӳсме чăрмантарчĕç, хыççăнах вара шăрăх çанталăк чылай хушă тăчĕ. Çаксем, паллах, кĕр тыррисемпе çур тыррисен тухăçне палăрмаллах чакарчĕç. Çĕр ĕçченне çуллахи тапхăрта çăмăл килмерĕ.

Эпир пĕлтĕр кашни гектартан малтан палăртса хунинчен 10-15 центнер каярах тырă пухса кĕртрĕмĕр. Район администрацийĕ пуринчен ытларах тĕштырă туса илнĕшĕн паракан куçса çӳрекен ялава ку хутĕнче тивĕçлĕ пулаймарăмăр эпир. Анчах та çанталăк кăларса тăратнă йывăрлăхсем пире çĕрулми туса илессипе мала тухса районăн куçса çӳрекен ялавне çĕнсе илес ĕçре чăрмав кӳмерĕç. Механизацилене звено членĕсем кашни гектартан (ку культурăна 90 гектар çинче лартнă) вăтамран 140 центнер «иккĕмĕш çăкăр» пухса кĕртме пултарчĕç. Çĕршывăн тĕрлĕ районĕсене паха çĕрулми ăсатнипе пĕрлех ăна вăрлăхлăх ытлăн-ситлĕн хывса хăварнă. Кĕр тыррисене те вăхăтра акнă. Кăçалхи хĕл кунĕсенче хирте юр хулăм, çакă калчасене лайăх сыхласа хăварма пулăшĕ.

Экономика кăткăс лару-тăрура пулни пусăçаврăнăшĕсене те тивĕçлĕ шая çитерме хистет. Пирĕн хуçалăхра çак ыйту тĕп вырăнта. Эпир, азот ытларах пухма пулăшакан культурăсене (пăр-ça, нумай çул ӳсекен курăксем), çавăн пекех кĕрхи тата çурхи тулăсен малашлăхлă сорчĕсене акса тăватпăр. Минераллă удобренисем хакланса кайнă пирки вĕсене ытлăн-ситлĕн туянаймастпăр хальхи вăхăтра, çавна май «çĕр эмелне» тăпрана хывасси те палăрмаллах чакрĕ. Вырăнти удобренисем хатĕрлессипе ытларах тимлеме тивет. Çĕнĕ технологисене çул пама тăрăшатпăр. Вĕсempe усă курни пусăçаврăнăшĕсенчи культурăсене çум курăксем «хупласа илессинчен» те, хурт-кăпшанкăсем сиен кӳрессинчен те хăтăлма май парать.

Хуçалăхри машина-трактор паркĕ çак кунсенче ял хуçалăх техникине çуракине хатĕрлеме кӳлĕннĕ. Механизаторсемпе юсавçăсем çĕр ĕçлесе хатĕрлемелли агрегатсене графикпа пăхнă вăхăтра хатĕррисен ретне лартассишĕн тимлеççĕ. Инженерипе техника служби вĕсен ĕçне тĕрĕслесех тăрать. Хуçалăхри МТП иртнĕ çулта йĕркеленĕ смотр-конкурсра мала тухрĕ, пĕтĕм техникăна хĕл каçма вăхăтра тата лайăх пахалăхпа лартрĕ, çавăншăн район администрацийĕн пĕрремĕш степеньлĕ дипломне тивĕçрĕ.

Паллă ĕнтĕ, финанс тĕлĕшĕнчи лару-тăру йывăр пулнипе халĕ хуçалăхсем хăйсене кирлĕ çĕнĕ техникăна туянаймаççĕ. Аграрлă тытăмра хуçаланакан йĕркесĕрлĕхсене хăй тĕллĕн пĕтерме хуçалăхăн вăй çитеес çук. Ял хуçалăхĕнче палăрăмлă çитĕнӳсем сахалтарах та сахалтарах пулса пыни тĕрлĕ çăлтавсемпе çыхăннă. Отрасле çĕнтерӳ çулĕ çине тăратасси, производствăн тĕп фончĕсене лайăхлатасси ытла та вăраххăн пулса пырать. Эпир, ялта тавар туса кăларакансем, финанс, пурлăхпа техника, информаци пуянлăхĕсемпе туллин усă кураймастпăр, хатĕр продукцие те вăхăтра вырнаçтараймастпăр. Рынокăн инфратытăм аталанăвĕ ялта тивĕçлĕ шайра пулманни вăрттăнлăх мар.

РФ Правительстви 2007 çулхи утă уйăхĕн 14-мĕшĕнче йышăннă Патшалăх программипе килĕшӳллĕн, ял хуçалăхне аталантарас, ял хуçалăхĕнче туса илнĕ продуктсене вырнаçтарас тĕллевпе 2008-2010 çулсенче пурнăçа кĕртмелли ĕçсене палăртнă. Ку Программа пурнăçа кĕни ял çыннисене, отрасле, çĕршыва мĕн парĕ? Ку ыйту хуравне каярахпа вăхăт уçăмлатĕ-ха. Программăра çакна палăртнă: юлашки 8 çул хушшинче ял хуçалăхĕн экономики ӳсĕм çулĕ çине тăчĕ. 1999 çултан пуçласа 2006 çулччен ку отрасльте продукци туса илесси 34,4 процент ӳснĕ. Апла пулсассăн та, ялта социаллă пĕлтерĕшлĕ ыйтусем çав-çавах çивĕч, вĕсене татса парасси тивĕçлĕ шайра мар.

Патшалăхăн çĕнĕ программи лизинг условийĕсене тĕпе хурса, интенсивлă технологисене çул пама пулăшакан пысăк технологиллĕ комплекссене ĕçе кĕртме пулăшмалла. Çав комплекссем хальхи йышши çĕнĕ машинăсемпе оборудованирен тăраççĕ. «Техникăн тĕп енĕсемпе тивĕçтересси майĕпен лайăхланмалла, – тенĕ çав документра. – Çĕршыври ял хуçалăхне çĕнĕ комбайнсемпе тивĕçтерессине 2010 çул тĕлне, тракторсемпе тивĕçтерессине 2011 çул тĕлне вĕçлемелле». Апла-тăк, аграрлă тытăм çакăн хыççăн çĕнĕлле «сывлама» пуçлас шанăç пур-ха.

Йывăрлăхсене шанчăклăнах парăнтарса пынă май, пирĕн ялсем ӳлĕмрен çĕнĕлле пурăнма тытăнăç. Эпĕ çӳлерех илсе кăтартнă – çĕнĕ Программа та çак енĕпе тăвакан шанчăклă «утăм» пултăрччĕ. Вăл Раççей хресчĕнĕсен кăмăлĕнче ырă туйăмсем кăна çуратăрччĕ.

П. ЧУГАРОВ,
Ильич ячĕллĕ колхоз ертӳçи, Чăваш Республикин ял хуçалăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Эпир – Президент гранчĕн телейлĕ хуçисем

/Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр./.

пĕлĕве анлăлатас тĕллевпе вĕрентекенсен икĕ ушкăнĕ ăс пухаççĕ. Пирĕн учительсем компьютерпа ĕçлеме пĕлеççĕ кăна мар, вĕсем Интернет урлă тĕнче анлăшĕнче çыхăнăва тухма пултараççĕ, хăйсене кирлĕ информацисемпе паллашаççĕ.

Иртнĕ вĕренӳ çулĕнчен пуçласа пирĕн шкулта вуннăмĕш классенче 4 профиль вĕрентĕвне йĕркеленĕ, тăхăрмĕшсене профиль умĕнхи хатĕрленӳ программипе ăс параççĕ. Çавăн пекех темиçе профильпе уйрăм пайсем çине уйăрса вĕрентеççĕ.

Районта «Шкул автобусĕ» программăпа 9 автобус туяннă. Куллен кунах шкул автобусĕ пирĕн база шкулне 100 ачана яхăн турттарать. Районта вара халăх пурăнакан 21 пунктран пурĕ 356 ачана база шкулĕсене пĕлӳ пухма илсе çитереççĕ, çапла вара пур ача та ăçта пурăннине тата ашшĕ-амăшĕсен тупăшĕсене пăхмасăр паха пĕлӳ илме пултартăр тесе майсем туса параççĕ.

Инновци вĕрентӳ программисене ĕçе кĕртнипе тата пĕтĕм коллектив тухăçлă тата килĕштерсе ĕçленипе Йĕпреçри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 1-мĕш вăтам шкул патшалăхăн пысăк пулăшăвне илчĕ. Эпир 2007 çулта Раççей Президенчĕн гранчĕн телейлĕ хуçисем пулса тăтăмăр. Грантăн укçи-тенкипе пирĕн шкул валли мобильлĕ компьютер класĕ (11 ноутбук), биологи, хими тата истори кабинечĕсем валли оборудовани, пуçламăш классем валли сĕтел-пукан, виçĕ мультимедиллĕ проектор (вĕсене ют чĕлхе тата географи кабинечĕсене, акт залне вырнаçтарнă), вĕрентӳ кабинечĕсем валли «Мимио» устройство копине, 16 класс доскине тата вĕрентӳ ĕçĕнче кирлĕ ытти хатĕрсене туяннă. Çавна май педагогсен ĕçĕ те самай çĕнелсе улшăнчĕ, классем те тĕрлĕ оборудованипе пуянланчĕç, вĕрентӳ пахалăхĕ те лайăхланса пыни куç умĕнчех. Пирĕн патра вĕрентĕве информатизацилесси çине яланах тимлĕх уйăрасси тĕп вырăнта тăрать. Вĕренӳ кабинечĕсене компьютер оборудованийĕпе пуянлатас тĕлĕшпе нумай ĕç тунă. Сăмахран, ют чĕлхе кабинечĕ валли те хальхи вăхăтри компьютер туянтăмăр. Халĕ учитель те, ачасем те унпа анлăн усă курма пултараççĕ.

Çаксем пурте пирĕн ачасене пахалăхлă пĕлӳ илмелли майсене анлăлатаççĕ, паллах, пысăк кăтартусем туптама пулăшаççĕ. Пирĕн пултаруллă ачасем тĕрлĕ шайри интеллект конкурсĕсене тата пултарулăх ăмăртăвĕсене хастар хутшăнса призлă вырăнсене тивĕçеççĕ. Пирĕн шкулта мăнаçланмалли ачасем нумай.

Шкулсене пĕрлĕхлĕ патшалăх экзаменĕсем тытассине пурнăçа кĕртнипе çыхăнтарса реконструкцилени уйрăмах район центрĕсенчи, ял-поселоксенчи шкулсенчен вĕренсе тухакансене аслă вĕренӳ шкулĕсене кĕме пысăк майсем уçса пачĕ. 2007 çулта пирĕн шкул выпускникĕсен 64 проценчĕ (70 ача) пĕрлĕхлĕ патшалăх экзаменĕн кăтартăвĕсемпе аслă вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕчĕç, 33-шĕ вара вăтам вĕренӳ учрежденийĕсенче пĕлӳ илеççĕ тата 5-шĕ профтехучилищĕсене суйласа илчĕç.

«Вĕрентӳ» наци проекчĕ шайĕнче пысăк задачăсем татса пама тивет пирĕн. Районти пур шкулăн та çĕнĕ проектсен шыравĕнче ăнăçусем туптаса Президент гранчĕсене тивĕçессишĕн тапăçланмалла тесе шутлатăп.

В. РОМАНОВ,
Йĕпреçри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 1-мĕш вăтам шкул директорĕ.

ВАТĂСЕНЕ КӲНĔ САВĂНĂÇ

Йĕпреçри шкул-интернатăн 6-мĕш класĕнче вĕренекенсем пушă вăхăтра чăваш фольклорĕн тĕслĕхĕсемпе паллашаççĕ. Вĕсем ĕлĕк-авалтанах упранса юлнă юрă-ташăсем, йăла-йĕркесем çинчен лайăх пĕлес тĕллевпе йĕркеленĕ пултарулăх ушкăнне çӳреççĕ. Хăйсен ăсталăхĕпе вара ыттисене паллаштарассине тĕп вырăна хураççĕ. Акă çак кунсенче кăна вĕсем Йĕпреçри Ветерансен çуртĕнче хăнара пулчĕç. Кăçал иккĕмĕш хут. Ачасем кунта хӳтлĕх тупнă çынсене фольклор тĕслĕхĕсене тĕпе хурса йĕркеленĕ концерт программине кăтартрĕç. Асаттесемпе асаннесем, кукаçисемпе кукамайсем тĕл пулу хыççăн хăйсен çамрăклăхне аса илчĕç. Ачасемпе ваттисен хушшинчи калаçу чылайччен тăсăлчĕ.

– Эпир сирĕн пата килсех çӳрĕпĕр, – терĕç вĕренекенсем сывпуллашнă чухне. – Сире çĕнĕ юрă-ташăсемпе савăнтарăпăр.

Т. КОРОЛЕВА,
воспитатель.

ПОЗДРАВЛЯЕМ!

От всей души любимую **НИКОЛАЕВУ Людмилу Геннадьевну,** фельдшера отделения скорой медицинской помощи Ибресинской ЦРБ с 55-летием.

Сегодня ты стройнее и моложе,
Сегодня ты нежна и весела.
И, говоря по правде, не похожа
Что эта дата и к тебе пришла.
Пусть ведет счастливая дорога,
И удача ждет тебя в пути!
55, поверь, не так уж много:
5 на 5 всего лишь 25!

КУМА, НАТАША, АРКАША, АНЯ, ПОЛИНА, РИММА.

х х х

Дорогую, уважаемую коллегу – фельдшера «Скорой помощи» Ибресинской центральной районной больницы **НИКОЛАЕВУ Людмилу Геннадьевну** тепло и сердечно поздравляем с 55-летним юбилеем!

Желаем, чтоб жизнь текла по той дороге,
Где нет ни боли, ни большой беды,
И чтоб поддержали тебя близкие, родные
В минуты испытаний и грозы.
Чтоб никогда не знала ты измены,
Разлуки и предательства друзей.
Желаем тебе без меры: крепкого здоровья,
Счастья, радости и много светлых дней.

КОЛЛЕГИ.

САЛАМЛАТПĂР

Хаклă çыннăмăра, юратнă мăшăра, аттене, хисеплĕ хуняçана, асатте-кукаçине – Йĕпреç поселокĕнче пурăнакан **Вячеслав Павлович ПАВЛОВА** чаплă юбилейпа – 80 çул тултарнă ятпа – чунчĕререн ăшшăн саламлатпăр. Пурнăç çулĕпе ӳлĕмрен те çĕнтерӳллĕн утма, тăван кил ăшшине упрама, ачасемпе мăнуксен савăнăçне пĕрле пайлама тапса тăракан çăлкуç пек иксĕлми вăй-хал, чăваш юманĕ пек çирĕп сывлăх, шуçăм çути пек çутă ăраскаллă кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр.

Пурăн пĕртте ватăлмасăр,
Ан пĕлсем чир-чĕр мĕнне.
Чунупа пул ĕмĕр çамрăк,
Телейпе пĕрле çӳре.

МĂШĂРĔ, ЫВĂЛĔСЕМПЕ ХĔРĔÇЕМ, КĔРӲШĔСЕМПЕ КИНЕСЕМ, МĂНУКЕСЕМ.

х х х

Пурнăç çулĕпе пĕрле утакан савнă мăшăрăма, юратнă аннене, хисеплĕ хунямана, хаклă асаннене – Хурамалта пурăнакан **Ираида Кирилловна СЕМЕНОВАНА** – чĕре çумне çепĕççĕн çупăрласа чаплă юбилейпа, 70 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, сурпан пек хитре те хуркайăк çулĕ пек вăрăм кун-çул, ирхи сывлăм пек çутă ăраскаллă ĕмĕр, çăлкуç пек иксĕлми телей сунатпăр.

Ăраскаллă пурăн эсĕ,
Нихăçан та ан чирле,
Ĕмĕр ватăлма пĕлмесĕр
Пул эс пирĕнпе пĕрле.

МĂШĂРĔ, ЫВĂЛĔСЕМ, КИНЕСЕМ, 6 МĂНУКЕ, ХĂТИСЕМПЕ ТĂХЛАЧИСЕМ.

х х х

Юратнă пысканнене – **Ираида Кирилловна СЕМЕНОВАНА** (Хурамал ялĕ) – ăшшăн-ăшшăн ыталаса çуралнă кунĕпе – 70 çул тултарнă ятпа салам яратăп. Ан чирле, ан ватăл, хаклă çыннăм, нихăçан, пул эс маншăн хĕвел пекех ялан. Эпĕ сана чун-чĕререн юратса хисеплетĕп, пурнăçра ырринне кăна курма сĕнетĕп, ăшă кăмăлушăн чĕререн пуç тайса тав тăватăп, нумай çул пурăнма ырлăх-сывлăх сунатăп.

Таймапуçăмпа – хресна хĕрӳ Галя РАЙМОВА.

х х х

«Васкавлă пулăшу» машинине яланах тĕрĕстĕкел çӳретекен водителе, хамăрăн хисеплĕ ĕçтешĕмĕре – Пучинкере пурăнакан **Василий Петрович ЕРЕМЕЕВА** – сумлă юбилейпа, кăрлачăн 3-мĕшĕнче 60 çул тултарнă ятпа хĕрӳллĕн те ăшшăн саламлатпăр, вăрăм ĕмĕр, тулли телей, çителĕклĕ те тату, çутă ăраскаллă пурнăç сунатпăр.

Пул ялан хавас та ырă,
Ан пĕлсем чир-чĕр мĕнне.
Чунупа пул ĕмĕр çамрăк,
Телейпе пĕрле çӳре.

ПĔРЛЕ ĔÇЛЕКЕНСЕМ.

х х х

Çĕнĕ çул пирĕн киле çĕнĕ савăнăç-телей илсе килчĕ: эпир хамăрăн çывăх çыннăмăра – мăшăра, аттене, хуньăмпа хуняçана, асатте-кукаçине – **Василий Петрович ЕРЕМЕЕВА** (Пучинке ялĕ) кăрлачăн 2-мĕшĕнче паллă тăвакан юбилейпа – 60 çул тултарнă ятпа шатăр сивĕ витеймисĕ хĕрӳ туйăмлă салам яратпăр, уяв кĕрекинчи хаваслăха ĕмĕр тăршшĕпех упрама, сывлăхлă та телейлĕ пулма, ĕмĕт-тĕллевĕсене çитсе пыма, тăван-пĕтенпе килĕштерсе пурăнма ырлăх-ăнăçу сунатпăр.



Килĕштерсе пурăннине мĕн çиттĕр?
Юр-кĕрт хӳсе ан кайтăр сан çулна.
Раштавăн витĕр шăнтакан сивви те
Ан пăрлантартăрччĕ ыр кăмăлна.

МĂШĂРĔ, 4 ЫВĂЛĔПЕ 2 КИНĔ, ХĔРЕПЕ КĔРӲШĔ ТАТА 4 МĂНУКЕ, ÇЫВĂХ ТĂВАНЕСЕМ.

Республикăри конкурс çĕнтерӳçисем

Çак кунсенче Шупашкарта культурăпа искусствăн вĕренӳ заведенийĕсем валли наци вĕрентĕвĕн чи лайăх программине палăртас тĕллевпе республикăри пĕрремĕш хут конкурс иртнĕ. Çак конкурсăн тĕллевĕ – Чăваш Республикинчи культурăпа искусство тытăмĕнчи вĕрентӳ заведенийĕсенче пĕлӳ парассине лайăхлатасси, кунпа пĕрлех преподавательсен професси ăсталăхне ӳстересси тата малтисен опытне çул парасси.

Конкурса культурăпа искусствăн хушма тата специальность енчен вăтам пĕлӳ паракан учрежденисен преподавателĕсене хутшăнтарнă. Татьяна Андреевна Кириллова ертсе пыракан Йĕпреçри ачасен искусствăсен шкулĕн преподавателĕсем çав тупăшăва хутшăнас тесе хастар ĕçлерĕç. Искусствăсен шкулĕ тăратнă 5 программăран виççĕшĕ призлă вырăнсене тивĕçрĕç. «Вариатлă программа» номинацире шкул директорĕ, театр уйрăмĕн преподавателĕ Т. А. Кириллова хатĕрленĕ «Актер ăсталăхĕн никĕсĕсем» программа иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ. Музыка уйрăмĕн преподавателĕ С. Л. Московкина вара «Пĕтĕмĕшле эстетика уйрăмĕнче музыка грамотине вĕрентес ĕçре наци компоненчĕпе комплексла усă курасси» ĕçĕпе «Адаптаци программи» номинацире иккĕмĕш вырăна тухрĕ.

Искусствăсен шкулĕн ӳнер уйрăмĕн Пучинкери структура подразделенийĕн преподавателĕ С. С. Русскован «Алĕç» ăсталăхĕнчи чăваш культурин элементĕсем» ĕçне «Автор программи» номинацире виççĕмĕш вырăн пачĕç. Малти вырăнсене йышăннă преподавательсене дипломсем тата укçан премисем парса чысларĕç.

Жюри Йĕпреçри искусствăсен шкулĕн преподавателĕсем конкурса хастар хутшăннине палăртрĕ. Хушма вĕрентĕвĕн нихăш учрежденийĕ те çакăн чухлĕ çынна явăçтарайман. Вĕсен кăтартăвĕсем те тивĕçлĕ шайра.

Преподавательсем хатĕрленĕ вĕрентӳ программисем ачасен пултарулăхне хальхи вăхăтри социокультура сулăмĕсене тĕпе хурса аталантарма пулăшăç.

Çĕнтерӳçĕсене саламланă май, пултарулăх ĕçĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем тума ăнăçу сунатпăр.

Ӳкерчĕкре (сулахайран сылтăмалла): *Н. Н. Рекунова, С. Л. Московкина, С. С. Русскова, Т. А. Кириллова, Н. А. Александрова.*

КРОССВОРД «НОВОГОДНИЙ»



СЛЕВА НАПРАВО: 1. Обход «Мороза-воеводы». 3. Головной убор Снежной Королевы. 5. Чародей. 6. Наряд для русской зимы. 7. Опера П. И. Чайковского. 9. Бал без танца. 11. Казачий хит от Олега Газманова. 14. Закуска к горилке. 15. Под какую водку произносят тосты в Южной Азии? 18. Американский штат, где есть город Санта-Клаус. 20. Фасон мужской рубашки. 21. Трапеза. 23. Композитор и певец, автор песни «Конфетти». 25. Готический оргнамент. 27. Собрат Деда Мороза Санта-... 28. Крепкий алкогольный напиток. 31. Вид религиозного песнопения. 33. Молдавская свирель. 36. Древнегреческий сосуд для вина. 37. В старой России – орган городского самоуправления. 38. Время начала Новогоднего карнавала. 41. При ком 1 января в СССР стало нерабочим днем? 43. И снежная, и нежная. 45. Прародитель рода человеческого. 47. Характер, совокупность душевных свойств.

СПРАВА НАЛЕВО: 2. Трость Деда Мороза. 4. У Деда Мороза накладная... 5. Из него делают начинку для пельменей. 6. Кругляш с новогодней елки. 8. Крокодил, друг Чебурашки. 10. Кондитерское изделие. 12. Реплика актера на сторону. 13. Вид яркоокрашенных попугаев. 16. Платок – покрывало. 17. Верхняя одежда для непогоды. 19. Башкирский национальный танец. 22. Подарок, пожертвование. 24. Горная система в Азии, где встреча Нового года начинается с танца лам. 26. Новогодний телефильм об института волшебных услуг. 29. Поступок, действие. 30. Благолепие, миловидность. 32. В старину – ковш для питья вина. 34. Новогодняя пиротехническая игрушка. 35. Синтетическое волокно. 36. «Белила» для борща. 39. Шляпа снеговика. 40. Натуральный налог. 42. Пряность, приправа. 44. Театральное обозрение. 46. На елку их повесили и встали в хоровод.

Составил В. ПАВЛОВ, п. Ибреси.

ХАÇАТĂН 106-МĔШ НОМЕРĔНЧЕ ПИЧЕТЛЕННĔ СĂМАХКАÇМĂШ ТУПСĂМĔСЕМ

СУЛАХАЙРАН СЫЛТĂМАЛЛА: 1. Тилĕ. 3. Ипполитов. 8. Улах. 13. Миасс. 14. Устюг. 15. Анаткас. 19. Фиалка. 20. Клирос. 21. Спонсор. 22. Вата. 24. Космонавт. 25. Куба. 29. Итали. 30. Рояль. 31. Грант. 32. Акула. 33. Утрав. 34. Огайо. 35. Этем. 36. Секундант. 40. Штат. 45. Америка. 47. Вăрман. 48. Албани. 49. Асламас. 53. Клоун. 54. Ентеш. 55. Рота. 56. Исламабад. 57. Акын.

ÇӲЛТЕН АЯЛАЛЛА: 1. Тимофеев. 2. Лампас. 4. Пуса. 5. Орда. 6. Инок. 7. Опус. 9. Лагерь. 10. Хиросима. 11. Саккун. 12. Сталин. 16. Напас. 17. Танго. 18. Айова. 23. Авторитет. 26. Балалайка. 27. Миттова. 28. Урмаков. 35. Элеватор. 37. Кăмăс. 38. Нарта. 39. Аккра. 41. Талисман. 42. Агаков. 43. Палата. 44. Брикет. 46. Маршак. 49. Анис. 50. Лава. 51. Мама. 52. Сена.

ÇУЛ-ЙĔР ХĂРУШСĂРЛĂХĔШĔН

Хăрушсăрлăх çинчен маннă

2007 çулхи раштавăн 22-мĕшĕнче 12 сехет тĕлнелле Йĕпреç-Улатăр автоçул çинче инкеклĕ ĕç пулса тухнă. Канаш хулинчи пурăнакан А. А. Евдокимов «Хендай» автомобильпе УАЗ-315192 маркăллă транспорта «сĕртĕннĕ». Ку инкек çул çинче транспорт хатĕрне хăрушсăр дистанцинче тытса пыманран пулнă. Икĕ транспорт хатĕрне те пысăк юсав ĕçĕсем кирлĕ.

Çав кунах, тепĕр сехетрен, Йĕпреç поселокĕнчи Энгельс урамĕнче çул-йĕр инкекĕ пулса иртнĕ. В. Ф. Голькин ВАЗ-21099 машинăпа пынă. Çул-йĕр правилисене пăхăнса унăн ВАЗ-21103 çăмăл машинăна çул памалла пулнă, анчах водитель çакăн пирки аса та илмен. Çул-йĕр инкекĕнче икĕ транспорт хатĕрĕ сиенленнĕ.

Каялла чакарнă – инкек тунă

2007 çулхи раштавăн 22-мĕшĕнче Йĕпреç поселокĕнчи Пионерская урамра çул-йĕр инкекĕ пулнă. А. В. Иванов водитель ВАЗ-2114 автомобиль каялла чакарнă май çак маневра пурнăçланă чухне пăхăнмалли йĕркесем çинчен вăхăтлăха маннă. Транспорт хатĕрĕ «Фольскваген Гольф» çăмăл машина çине кĕрсе кайнă, сиен кӳнĕ. Ку ĕç 18 сехет те 45 минут тĕлнелле пулса иртнĕ.

А. ЛУКЬЯНОВ, ÇÇХПИ районти уйрăмĕн агитацип пропаганда ĕçĕсене пурнăçлакан инспектор.

Салам сана, Çĕнĕ çул!

АКРОСĂВĂ

Систермесĕр хыçа юлчĕ тепĕр çул,
Асра юлĕ вăл тăрса ĕçĕсемпе.
Лайăххи, чăнах та, пулчĕ темĕн чул,
Алăкра йăл-ялл! кулать халь Çĕнĕ çул.
Миххине тултарнă вăл парнесемпе.
Савăк самантра юхаççĕ юрăсем
Анлăн сарăлса çĕршыв-анне тавра.
Нăйкăшу, хăпсам: паян чун-чĕресем
Ав, епле тапаççĕ çутă уявра.

Сăмăллăн ӳкеççĕ мар-и çаврăнса
Ĕнчĕ пек курăнакан юр пĕрчисем.
Нимĕнле чăрмав пӳлеймĕ ĕç ăнсан
Ĕмĕт çул-йĕрне: вăл ялкăштăр çиççе!

Сунатлă кăмăл-туйăмпа хавхаланса,
Ӳтар апла, тус-тăвансем, ырра шанса,
Лапка-лапка юр çутинче çăмăлланса...

Г. КУЗНЕЦОВ.

ТАВ ТĂВАТПĂР

Пирĕн çемьене кĕтмен çĕртен инкек килсе кĕчĕ – юратнă аннемĕр, хаклă кукамай, Чăваш Тимешре пурăннă Клавдия Захаровна Морковкина, йывăр чирлесе ӳкнĕ хыççăн, 82 çула кайса пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Ана тирпейлесе пытарма пулăшнă мĕнпур çынсене – Шупашкарти, Çĕнĕ Шупашкарти, Йĕпреçри, Хурамалти, Чăваш Тимешри тăванăмăрсене, кӳршĕсене, юлташсене – пĕтĕм чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе тав тăватпăр. Чăваш Тимешри Валентина Куракована, Николай Николаева уйрăмах пысăк тав.

Çынна ырă туни çĕре ан ӳктĕр. Сăвап пултăр, Турă ан пăрахтăр сире.

АЧИСЕМ, МĂНУКЕСЕМ.

ТАВ ТĂВАТПĂР

Пирĕн çывăх çыннăмăра, юратнă аннене, кукамай-асаннене – Пысăк Упакассинче пурăннă **Александра Евламповна КОРНИЛОВАНА** – юлашки çула ăсатма хутшăннă, пирĕн йывăр хуйăха пĕрле пайланă, ăшă сăмахпа та, пурлăхпа та пулăшу панă мĕн пур ырă çынсене – ял-йыша, кӳршĕсене, тăвансене, юлташсене – чун-чĕререн тав сăмахĕ калатпăр.

КОРНИЛОВСЕН, ЯРЧЕЕВСЕН çемйисем.

Коллектив РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу» выражает глубокие соболезнования начальнику производственного участка Зориной Алевтине Александровне по поводу безвременной кончины ее матери

ПЕТРОВОЙ
Елизаветы Ивановны.

МУЗ «Ибресинская ЦРБ» выражает глубокое соболезнование акушеру-гинекологу женской консультации Владимировой Л. М. по поводу смерти

МАТЕРИ.

Администрация и профсоюзный комитет ГУ «Ибресинский лесхоз» скорбят по поводу преждевременной кончины бывшего главного механика

ВАСИЛЬЕВА
Василия Михайловича
и выражают соболезнование семье и близким покойного.

ВУЛАКАНСЕНЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

Хаçатăн çитес номерĕ 2008 çулхи кăрлачăн /январь/ 9-мĕшĕнче, кĕçнерникун тухать.

Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.

Главный редактор АЛИМАСОВ К. Д.

За победу

Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР

АДРЕС РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6

ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, стол заказов — 2-11-97. АДРЕС ГУП "Вурнарский издательский дом": 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.

Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.

Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП "Вурнарский ИД". Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3299: чув. – 2420, русск. – 879. Зак. №

Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком (Р)

Срок сдачи в печать — 17.00
Сдан в печать в 10.00

Ответственный за выпуск Филиппов А. А.